ШĂХАСАН. Пирĕн умра халăх переписне лайăх хатĕрленсе болъшевикла иртерес задачă тăрать. Çакна пурнăçа кĕртес тĕллевпе хĕрӳлĕн ĕçлеме тытăнтăмăр. Колхозниксемпе йединоличниксене переписç ҫинчен ăнлантарса паратпăр. Шуркасси йăлсоветне кĕрекен пилĕк колхоз, икĕ шкул тата вулав сурчĕ сумĕнче переписç кĕтесĕсем организацилерĕмĕр. Йăл ҫынсемпе переписç кĕтесĕсене халăх переписне мĕншĕн иртерянне тата унăн задачисем ҫинчен пĕлме пыраççĕ. Кусемсĕр пуçне переписç ыйтăвĕне справкăсем паракан сĕтел пур.

Кон. Иеремейĕв.

Укҫа-тенкĕ пухассине манăҫа хăварнă

Кивĕ Шăмăршă йăлсоветĕ (Шăмăршă р.) государствăна умĕнчи обязательствăсене: тĕштырă, аш-какай, сĕт-çу тăрăтассине пĕтĕмпех тултарнă, çăм тăратас планна 93,5 процент, сĕрулми—86 процент тултарнă.

Çав вăхăтрах йăлсоветĕ укҫа-тенкĕ пухас ĕçре питех те кайа йăлса пырать. 4-мĕш кварталăн финанс планне декабĕрĕн 20-мĕш тĕлне 54,4 процент ҫеç тултарнă. Вăл шутран займ укҫине 10 процент кăна пухнă.

Çакă вăл йăлсоветĕ ку ĕçрен пĕтĕмĕшех пăрăнса кайнинчен, йăлсовет ҫумĕнчи финанс секцийĕ ĕçлеменнинчен килет. Секци членĕсем хут ҫинче анчах шутланса тăраççĕ. Государствăна умĕнчи обязательствăсене тата финанс планне тултарас ĕç тавра массăлă-политикăлă ăнлантару ĕçне начар организацилеймĕн.

Йăлсоветĕн хăйпĕр членĕсемпе комсомолĕсем государствăна умĕнчи обязательствăсене тата финанс планне тултарассишĕн тăрăшса ĕçлес пăхăнне, ку ĕçре хăйсем чăрмантарса пырраççĕ. Комсомолĕн Лукийанăв Василий укҫа-тенкĕ пăрмăсенчен пĕр тӳлевне те тултарман. Йăлсовет членĕ Балганăв Петр та государствăна умĕнчи пăрăмсене пĕрне те тӳлемен. Кун пек тĕслĕхсем тата нумай тупма пулать.

Парти Чăваш Обкомĕн И-ш пленумĕн постановленинче: «Йăлсоветĕсене йăлхуçалăх продуктисен натурăлă постăкăсен стĕпшăрĕ, сĕрулми, аш-какай, сĕт-çу тата çăм) сниксисене тăвас, обязательствăсене ситерес пăхăнтан тата вăл постăкăсене пыраса илес ĕçрен, налог тӳлевĕсене шутласа хурас ĕçрен хăтарни,—кашни колхоз, колхозниксем йединоличник государствăна умĕнчи хăйсен обязательствăсене пăлăртса хунă срукценче тултармала тăвассишĕн йăлсоветсем ответлă пулса тăрассине имĕш чухлĕ те чакармасть»,—тесе каланă. Анчах та йăлсоветĕнче ĕçлекенсем ку постановленине пурнăçа кӳртмеççĕ-ха.

Массăлă-йăнăнтарулă ĕçе анлăн сарса, государствăна умĕнчи обязательствăсене пĕтĕмпех пурнăçлассишĕн тăрăшмала.

М. Иванов.

Таварçавăрнăш планне тултарнă

ИЕТĔРНЕ. Иртнĕ сулсенче Пăлтай йăлповĕн Пăлтайри лавкка уйăрăм нихăçан та таварçавăрнăш планне тултарман. Кăçал пооданви пуласа ĕçлеме Светлов йăлтăваш лартсан ĕç ҫĕнелчĕ. Кашни кварталтах таварçавăрнăш планне тултарса пыма пуçларĕ. Лавкка виçсĕмĕш кварталти таварçавăрнăш планне 150 процент, тăваттăмĕш кварталăн планне 180 процент тултарчĕ.

И. Г. Чиндыкăв.

СĔНТĔРВĂРРИ. Кăçал Шуршăлти йăлпо куллен кирлĕ таварсене вăхăтра илсе килсе сутнине пысăк ситĕнӳ туре. Йăлпо декабĕрĕн 15-мĕшне çулталăкри таварçавăрнăш планне 120 процент тултарчĕ. Таварçавăрнăш планне тултарса ĕçре социалисăмла ăмăртса ĕçленине Шуршăл, Шемшер, Иртăнкасси, Улпер йăлесенчи лавкка уйрăмĕсем мăла тухрĕç.

П. Комиссарăв.

Государствăна тырă сутаççĕ

МĂН СĔНТĔР (Тутаркас р.). Сăрмаскассинчи „Заря" колхоз государствăна 90 центнер тырă сутрĕ. Куншăн колхоз Йăвăнри йăлпо урăлă автомашăн пайĕсем илме договăр турĕ.

Н. П. Семенов.

ЕЛĔК. Мăн Тукташ йăлĕнчи Максим Горький ячĕпе тăракан колхоз государствăна 174 центнер тырă сутрĕ. Тырă сутнă укҫана колхоз жнейкă илме йышăнать.

И. Тарасăв.

Мусачăв хулинчи Учительсен сурчĕнче.

ÜКЕРЧĔК СИНЧĔ: 455-мĕш шкул директорĕ О. П. Кремлева тата 468-мĕш шкул директорĕ К. В. Хрипченко ПСК(б) П историне вĕренмелли материалсем витрини патĕнче. Л. Великжанни фотоӳкерчĕкĕ (Бюро-клише ТАСС).

Осоавиахим райсовечĕ ҫителĕклĕ ĕçлемест

Пирĕн çĕршыври ĕççыннисем тăван çĕршывна пĕтĕм чĕререн йурăтаççĕ. Çавăнпа та кашни ĕççыни оборонăн ĕçне вĕренесшĕн. Осоавиахим организацийĕнче „Ворошиловский стрелок", ПВХО, ГТО, ГСО значокĕсене илме нормăсем парассишĕн. Анчах та ĕççыннисем ыйтнине пирĕн республикăри Осоавиахимăн хăшпĕр райсовечĕсем пĕрре пĕр пурнăçлаймаççĕ. Самахран, Осоавиахимăн Шăмăршă райсовечĕ ку тарана ҫитсе те йăлсенче оборонăн ĕçне вĕреннессине ҫителĕклĕн пуçарса йăман. Осоавиахим организацийĕсем хăйсен тивĕçлĕ ĕçĕсене туса пыраймаççĕ, чылайăшĕ хут ҫинче кăна шутланса тăраççĕ.

Осоавиахимăн йăлсенчи тата район центрĕнчи чылай организацийĕсем ПВХО нормисене пама райсовет ҫумĕнче газоокуриванă валăн уйрăм камерă тума ыйтрĕç. Ана райсовет халĕ те тума шутламаст.

Районра газоокуривани валăн уйрăм камерă сукнине ПВХО значокĕн ыттн нормисене пана сынсем значокĕсем илеймесĕр тăраççĕ.

Кив Чукалри туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем иртнĕ султах ПВХО значокĕн пур нормисене те пана, анчах халĕ те значоксем илеймен.

Осоавиахимăн районри совечĕ Осоавиахим организацисенче оборона значокĕн нормисене мĕнле паниссине тĕрĕслесе тăмаст. Çакна пула иртнĕ çул Шамкайри Осоавиахим членĕсем нормăсене кружока йĕртсе пыракан йышăннине ҫапкамерă витĕр тухмасăрах ПВХО значокĕсем илнĕ.

„Ворошиловский стрелок" значок нормисене пама Осоавиахим райсовечĕ йăлсенчи организацисенне патроницем ҫителĕклĕ тупса параймаст. Норма паниссене те значоксене илсе килсе памаççĕ.

Çакнашкалах районра ГТО, ГСО значок нормисене парас ĕç те ҫителĕксĕр.

Осоавиахимăн районри совечĕн председателĕ Козлов йăлтăш Осоавиахим ĕçне йĕркелес тĕллевпе ĕçлемест.

Й. М. Макçимăв.

Осоавиахим ĕçне ҫирĕплететпĕр

Урнарти (Вăрнар р.) Осоавиахим организацийĕнче ку тарăнччен хăйĕн ĕçне тивĕçлипе туса пыраймăн. Оборонă ĕçне вĕренесси ҫителĕксĕр пулнă. Халĕ йăлта тăватă ҫамрăк Хĕрлĕ Çартан тавăрăнчĕç. Вĕсем Осоавиахим организацийĕнче вăйлатас тĕллевпе ҫинче тăрса ĕçлеме пуçларĕç.

Декабĕрĕн 5-мĕшĕнче йăл халăхăн пухăвĕнче Хĕрлĕ Çăран патăрла ĕçĕсемпе Осоавиахим ҫинчен доклад туса парсан, Осоавиахим членне ҫĕнĕрен 10 колхозник кĕчĕç. Осоавиахим членĕсен йышĕ 44 ҫынна ҫитрĕ.

Осоавиахим организацийĕнче 5 ҫын ПВХО, 6 ҫын „Ворошиловский стрелок", 7 ҫын ГТО значокĕсем илчĕç. Халĕ татах йăлта 43 ҫын оборонăн значокĕсем илме хатĕрленеççĕ.

В. Алендейĕв.

Противогазсем туйанчĕç

Осоавиахимăн Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн Тутаркас районĕнчи уполномоченнийĕ сумĕнчи пуçламăш организацийĕнче лайăх ĕçлеме пуçларĕ. Осоавиахим члечĕсем оборонă ĕçне йăрăтса вĕреннеççĕ. Çак кунсенче организацире 17 ҫын ПВХО значокĕн нормисене пачĕç. Нумайăшĕ хăйсене валăн противогазсем туйанчĕç Осоавиахим членĕсем противогазсем тăхăнса 10 километрлă поход туса иртерчĕç.

И. Фролов.

Усĕм турĕ

1932 çулта Йĕрмошкинăри йăлпо (Вăрнар р.) виçĕ лавкка пулнă. Вăл вăхăтра йăлпо лавккисем çулталăкне те хĕрĕх пин тенкĕлĕх çеç таварсутнă. Таварсене лавсемпе турттарнă, автомашăнпа пулман.

Халĕ йăлпон пурĕ ҫичĕ лавкка. Канцеляринче телефон пур. Йăлпо пекарньă уснă, автомашăнпа туйаннă. Йăлпо ĕççыннисене кирлĕ таварсене вăхăтра илсе килме тăрăшат. Декабĕрĕн малтанхи кунĕсенчен тĕлĕкĕ йăлпо 720 пин тенкĕлĕх таварсутса çулталăкри таварçавăрнăш планне 112 процент тултарчĕ.

Ахваниç.

Танксемпе авиаци кучухнехи вăрçăра

Суран çар,—ку ĕнтĕ тата тепĕр хут Испанине Китайри вăрçăсен опычĕ тăрах куранат, — кучухнехи вăрçăра та тĕп, ĕçе тата паракан вăй пулса йулат. Çакăнпа пĕрлех, артиллери, танксем, авиаци пек хăватлă техникăлă вăрçă хатĕрĕсем ытларах та ытларах пысăк вырăн йышăнса пыраççĕ.

Çапах та, вăл йышши, йе ку йышши вăрçă хатĕрĕсем темĕн пек вăйлă пулсан та, вĕсĕн, хăйсене уйрăм иксем, хăйсар йĕнĕсем те пур. Артиллери мĕн пек вăйлăн çĕмĕрсе тăкма пултарасси пурнишĕн те палла. Вăл инçетрен тăшманăн çурран çарне, артиллерине, танксене çемĕрет. Анчах та, çак вăйлă артиллерийĕх, унăн позици çине флангран йĕ тылран тăшман танкĕсем пырса тухăс мĕн пулсан, нимĕн тăвайми вăй пулса йулат. Танк пырса тухсан вара хăйĕн пулемечĕсенчен артиллерисене вĕлерсе пĕтерет, тупăсене хăй айне туса çемĕрет.

Кучухнехи танксем те, хăйсен чĕрĕнче, артиллери патне сывăх дистанцине пырса ҫитичĕн, артиллеристсем пысăк сийĕн курраççĕ. Танксемшĕн танксене хирĕç хăвăрт перекен, пысăках мар, анчах çавăрăнăçлă тупăсем уйрăмăнах харуш. Вĕсем тăшмана курăнмала маг тăраççĕ, пытанма пултараççĕ, ҫук позицисем çине тухаççĕ, хăй чухне тата кĕтмен çĕртен пырса çĕмĕрме пултараççĕ.

Танксем, вĕсем çинче тупăсем пур пулсан та, танка хирĕç перекен тупăсенчен йăланах начар условисенче пуласçĕ. Çавăнпа та вĕсем, час-часах, ҫăпăçура хăйсем тĕлĕн анчах пулсан, пĕр пек мар условисенче пулаççĕ. Çапла ĕнтĕ, танксем хăйсем умне лартнă тĕллев тытне ҫитме пултарас тесен, тăшман артиллерине вăйсăратас пулат, унăн танксене пыма чарса тăракан вăйне хавшатас пулат. Çак задача вăрçăра артиллерине авиаци татса параççĕ.

Танксемшĕн тăшман авиацийĕ те пысăк хăрушлăх пулат. Танксен çапăçура ăуксене хупмала пулин, моторсем хытăнăн кĕрлени, тăшмансем те, хамăрăннисем те пăшалсенчен, тупăсенчен пенине йĕри тавра хĕрлеçе тăнă, çак самолетсем пурте вĕсем танкиссене тăшман самолетсĕмĕ атакă тума пынине вăхăтра сисме май памаççĕ, сиссен те питĕ кайа йăлса сисмеле пулаç.

Халăхи вăхăтра самолетсем пĕчĕн пыракан танксене питĕ сăртен тата тĕл тивретсе пĕтерме пултараççĕ. Танксем пĕрин-хыççăн тепри колоннăсемпе пына чухнехи ҫинчен калама та кирлĕ мар, кун пек чухне вĕсене сывăлтăран часах çĕмĕрсе тăкаççĕ. Самолетсем танксем ҫине бомбăсем пăрахаççĕ, бомбăсем çурăлнине гусеницăсене татаççĕ, ҫапла вара машинă малала каймăйми пулат. Вырăнтан танпанăмăн танк вăй тăшман артиллерийĕшĕн йе самолет ҫинчи тупăсемшĕн алçеми кăна пулса тăрат.

Çакăнтан вырăнат ӳнтĕ, ҫапăçурăн техничĕски средстваисемпе ҫапăçура хăйне уйрăмăн мар, пурнине те пĕрле усă курмала, пĕр йышши хĕçпăшалăн вăйсăр йĕнĕ вырăнне тепĕр йышши хĕçпăшалăн вăйлă йĕнĕне витĕнтерес пымала. Тăшмана пĕтерес тĕллĕше пĕр тĕллев патне çăкăн пек пур йышши хĕçпăшалăсемне пурнине те пĕр вăхăтра тата вĕсен ĕçĕсене пĕрпĕрнине килĕшӳлĕн туса пынине—хĕçпăшалсен взаимодействийĕ, тесçĕ. Кучухнехи пĕтĕм çар ҫапăçăвĕшĕн шăпах та çакăн пек взаимодействи пулни кирлĕ.

* * *

Ҫапăçăва танксемпе пĕр вăхăтра тухакан авиаци задачĕ мĕнле-ха? Пĕр танксен хăшпĕр вăйсăр йĕнĕсене пĕлетпĕр пулсан, çак задачсем мĕнле пулассине чухласа илме те йăвăрах мар.

Авиации задачи, чи малтан, танксем çапăçу уйăхне пынă чухне те, çапăçу вăхăтĕнче те, вĕсене тăшман сывлăпăран пырса атакă тума парас марри пулат. Çак ĕçе истребитĕлсен авиацийĕ тăват. Истребитĕлсем танксем иртсе пыракан вырăнсенче ĕçе танксем çапăçакан вырăнсенче сывлăпăра дежурта тăраççĕ, тăшман самолетĕсене танксем ҫине тапăнма пыма памаççĕ, вĕсене хирĕç атакă тăваççĕ.

Истребитĕлсем вăхăтра атакă тума пултарнăçĕр тесен, вĕсен пĕр вăхăтрах темиçе высота тĕлĕнче дежурта тăмала, çакăн пек тусан анчах тăшман самолетĕсене, вĕсем килсе тухма пултаракан высотасем патĕнче йăрса тытма пултараççĕ. Купсăр пуçне тата истребитĕлсене тăшман самолетĕсем сывхараса кинни ҫинчен сигналăпăр полотнищăсемне, йе дымовой завесăпа, йе радио тăрăх систереççĕ.

Танксене хӳтĕлеме, пăлăах, истребитĕлсем нумай кирлĕ, анчах кунта истребитĕлсем нумай кирлĕ пулни унĕнче те чăрăнса тăма йăрамаст, мĕншĕн тесен, тăшман, хăйне хирĕç танксем атакăна тухнă хăрушлăха курсан, танксен атакине чи малтан сыхлăпăран контратака тунипе пĕтерес çăртта тăрашат.

Танксене вăрçа хирĕ пытне пымали çуа ҫинче сывлăпăран хӳтĕлесе тăрасси вĕсем ҫук çертен иртсе пынă, пысăкăн урăл кăсна, хĕсĕк вырăнсенче иртсе пынă чухне ҫеç кирлĕ. Кунта пĕр авиации кăна ситеелекле мар, ҫуа участкăсен патĕнче танксене зенитла артиллерине пулеметсем хӳтĕлеме тăйи те кирлĕ.

* * *

Ҫапăçăна танксемпе пĕрле тухакан авиации иккĕмĕш задачĕ вăл—разведкă пулат. Танк ҫинчен йĕри-тавра мĕн пулнине курма йăвăр пулни, ҫапăçура ориентировка илме кансĕр пулни—çакăн вĕсем авиации умне разведкă тĕлĕнне питех те кирлĕ, ответлă задач пăларса тăратаççĕ. Çакăн пек разведкă вăл—уйрăмăнах—танксем уйрăм группăсемпе ҫапăçна чухне, тăшман тылне кĕрсе кайиннĕ çурран çыртан уйăрăлнă чухне питех те кирлĕ пулат. Сывлăпăра разведкă ĕçне - наблюдени самолетсем печчеллерен тăваççĕ.

Самолетсемпе танксем хушшинче сыхăну тытса пырасси йăвăр та пысăк ĕç. Ку сыхăну пурнăçĕн мĕнле радио тăрăх пулат. Хăш чухне тата ракетăсемпе кĕске сигналсем параççĕ. Çавăн пекех самолетсем ҫинчен ытти майсемпе те (пикировкă, горкă, сунатсене суллантарасси т. ыт.) сигналсем параççĕ. Çакăнпа танксем группин командирĕнчен донесени илсе ана командирăн поста ҫитермо тата командирăн пост группă умне лартакан ҫĕнĕ задачăсем ҫинчен пĕлтерме пултарат.

Танксен группи тăшман вырăсса тăракан вырăна пырса кĕни—вăтам тăвакан вырăна тăшманăн пĕтĕм пулеметсемпе артиллери системине йĕркеренкăларма пултарат. Çакăн пек пулни вăл наблюдени самолетĕсене тăшман зенитный орудисенчен перес ӳкерес хăрушлăха вăйсарлатма тата наблюдени самолетĕсене çĕр ҫинчен ытла пит сӳтес мар (800—1.500 метр çӳлĕшĕне) пулма май парат. Ана пулсан та, наблюдени самолетĕсене сывлăпăран навăкăлă хӳтĕ пулни кирлĕ. Вĕсем танксен атакине хутлесе пыракан истребитĕлсен хӳттинче анчах ĕçлеме пултараççĕ.

* * *

Авиации виҫҫĕмĕш задачĕ, ку ĕнтĕ чи кирлĕ задач пулат пулмала, танксене çапăçура тӳрĕмĕнчех пулăпасси пулат.

Танксен тĕп тăшманĕ — артиллери, вăл, танксене хирĕç перекен тупăсемпе пĕрле перес, танксем атакă тăвассине чарса лартма пултарат. Хăш чухне тăшман артиллерине чарса лартма хамăр артиллери вăйлăрах ĕçлеме пуçлани те ҫителĕклĕ пулат. Кунта танксене пуçлаша авиаци тухат. Танксене хирĕç перекен орудисене час-часах ҫĕр ҫинчен пурнăç йăвăр пулат, çав вăхăтрах сывлăпăран курма ҫăмăлтарах. Танксем çапăçакан района хӳтĕлесе тăракан истребитĕлсем, цикировкă туса, танксене хирĕç перекен орудисене пулеметсенчен перессĕç. Çак ĕçе тума, йăтарласа чĕнес илнĕ штурмовиксем, хăй чухне тата наблюдени самолетĕсем хăйсем те пултараççĕ. Çакăн пек атакăн тĕллевĕ вăл танксене хирĕç перекен орудисене пĕтерес хурăсссинчен

(Йулашки 4-мĕш страницăра)

Мурманск облаçĕнчи „Индустрия" совхоз Хибинскри полăрти опытлă станци калăрнă чи лайăх суртăл çĕрулми лартса устерет. Çĕрулми вăйăм шутпа гектартан 12 тонна, ӳĕрăм участкăсенче гектартан—28—30 тонна тăран тухнă.

ÿкерĕк çинче: „Индустрия" совхоз работницы А. Киселева çĕрулми пуçтарса кĕртет.

Б. Чесноковăн фото-ӳкерчĕкĕ (Прессканше).

Испанири фронтсенче

(ТАСС Парижран пĕтернисем тăрăх)

Хĕвелтухăçри фронт

Испанин оборонă министерствин официаллă сводкинче пĕтернĕ тăрăх, декабрĕн 28-мĕшĕнче пăлхавçăсемне интервентсем Нижний Сегре сектăрĕнче хăйăр атакăсем турă. Республиканецсем çав атакăсене йăлтăк сирсе пăрахнă. Шутпа «кусевичие таплашгарсан, Италин çурăс çăвăссем самолетсемпе тăвăс-тăвăс мунăăăă мунăăăă. Ăслăпăă» канăçсем хăйсен позицийĕсем çывăхĕнче итальянецсен икĕ танкне çĕмĕрсе тăкнă. Çав районрах итальянецсен «Фиат» йышши самолетне персе антарнă.

Тремп сектăрĕнче калĕ те хăйăр çăпăсусем пыраççĕ. Пăлхавçăсемне интервентсем, темиçе хутчен атакăсем тунă хыççăн, 883 тата 1.100 высотăсене йышăннă. Республиканецсен çав высотăсем çинче контратакă тунă. Балагер сектăрĕнче пăлхавçăсен çăрĕсем ирхине ирех артиллеристсем пеме пуçланă. Пилек сехет хушши персе тăнă. Республиканецсен позицийĕсем çине вунă пин снарядпа ытла кăларса янă. Темиçе хутчен танксемпе атакă тунă. Анчах республикăпа çăрĕсем гранатăсемпе вĕсен атакисене сирсе пăрахнă, тăшманăн икĕ танкне арестăна тăкнă.

Çăкăн хыççăн тăшман кайала чакнă.

Республиканецсем тытăкăна илнисем шутĕнче Италин вирĕп салтакĕ пур. Куншăн пуçне, республиканецсем çăпăçу пулнă вырăнта Италин лейтенанчĕн Вальтер Бацелла кĕлеткине тупнă.

Республикăпа авиацинĕ фронтăн пур сектăрĕсенче те пăлхавçăсен позицийĕсемпе вĕсен пухăнса тăракан çăрĕсем çине пулеметсенчен пенĕ. Сывлăшпи çăпăçу вăхăтĕнче *Италин «Фиат» йышши пĕр самолĕтне тата Германи «Мессершмидт» йышши темĕр самолĕтне* персе антарнă. Республикăпа авиацинĕ декабрĕн 27-мĕшĕнче вĕçĕ самолĕт персе антарнă: «Дорнье-17» йышшине икĕ самолĕт тата «Гейнкель-3» йышшине пĕрре.

Центрти фронт

Декабрĕн 28-мĕшĕнче çĕрле республика çарĕсем Гвадалахара сектăрĕнче пăлхавçăсен атакине сирсе пăрахнă.

Ытти фронтсенче улшăнусем çук.

* * *

Декабрĕн 27-мĕшпе 28-мĕшĕ хушшинче интервентсен самолĕтĕсем Аҫҫакарсехос (Кордова провинци), Белăҫкасар (Аҫҫакарсехосран çурçĕр хĕвеланăç ĕнненле) çине, çавăн пекех тата Валенси, Барселона, Таррагона тата Каталони сыранĕсем хĕрринче ытти пунктсем çине те бомбăсем пăрахнă. Гражданла халăхсем хушшинче вилнисемпе амăнинсем пур.

Батăйскрн граждански доточкисем шкулĕнче хĕрачăмсен ескарнăйи пур.

ÿкерчĕк çинче: куçсăлтăк-отличницăсем Гульâ Йевтухова, Анфиса Пузей тата Оля Сапфирова.

Д. Чернов фотожурналĕпе (Хроникăпа ТАСС).

Китайри вăрçă

(Чунцинран, Шанхайран тата Лондонран ТАСС корреспонденчĕсем пĕтернĕ тăрăх).

Центр Китайра

Ухаҫĕрен кантăрарах Китай çарĕсем, çурçĕр ĕнненле наступлени туса пыракаскерсем, июччоу хулине ĕеритавра хупăрласа илнĕ. Йапони çарĕсен ытларахăшĕ Иючжоуран тухса çурçĕр ĕнненле кайса вырнаçнă. Йапония Синьйаани гарнизоне (Ханькоуран çурçĕререх) икĕ пин çын чухлĕ ӳстернĕ. Сюхэ пуҫланшывĕн çурçĕр сыранĕ патĕнче Йапони çарĕсене ӳстерсе пыраççĕ пулни те, Китай чăсĕсем шыв урлă каçса Йапони позицийĕсем çине татти-сыпписĕрех тапăнаççĕ.

Кантăр Китайра

Кантонран хĕвелтухăçнерех Китай çарĕсем операцисене ăнăçлăн туса пыраççĕ. Декабрĕн 22-мĕшĕнче çĕрле китайецен малти позицийĕсене вăрçакан отрăчĕсем, Цзенчене пырса кĕнĕ те, унта йапонецсемпе хире-хирĕç тытăçса çапăçма пуçланă. Çапăçура йапонецсен 200 çын пĕтнĕ. Тул çутăлса киле пуçласан Китай чăсĕсем хуларан айккалла тухса кайнă, вĕсен мĕнпурĕ те пилĕк çын вилнĕ тата 12 çын аманнă. Шитоулин патĕнче калама çук хайăр çапăçу пуласа иртнĕ. Кунта йапонецсен пысăк сухагусем пулнă, вĕсем çав пунктран хĕвеланăç ĕненеде кайăла чакнă. Китайецсем пĕр тупă тата вăрçă хатĕрĕсем тыртса илнĕ.

Декабрĕн 24-мĕшĕнче йапонецсем Вейчжоу утравĕ çинче (Пакхойран кантăрарах) десант антарнă. Йапонецсем Китайăн икĕрĕ джонкисене (киммисене) туртса илсе пĕтерсе тăкнă. Утрав патĕнче Йапонин сакăр карапĕ йăкăр йăрса ларнă.

Çурçĕр Китайра

Çурçĕр Китайри фронтра декабрĕн 26-мĕшĕнче Йапони отрăчĕ Хецзиньпа районĕнче (Шаньси провинцин кантăрхĕвеланăç панĕ) Китай позицийĕсем çине атакăланă. Çапăçу пĕр кун кунĕпех пынă. Каçалапа йапонецсем хăйсен маатанхи позицийĕсем патне куçнă. Çакăнпа пĕр вăхăтрах çав районрах Йапони отрăчĕ, Хуанхе йăхăнашшĕ çине тапăнма шутласа, китаецсен позицийĕсем çине атакăланă. Çапăçусем халĕ те пыраççĕ-ха.

* * *

Декабрĕн 28-мĕшĕнче Йапони самолĕтчĕсем Туйăумиҫ çине (Хецзиньрен çурçĕр-хĕвеланăçнерех, Шаньси провинцин кантăр-хĕвеланăç пайĕнче) бомбăсем пăрахнă. 25 бомба ытла пăрахнă тата хула вăрринчи урамсем çине пулеметсенчен пенĕ. Декабрĕн 27-мĕшĕнче Йапонин 18 самолĕтĕ Ӳчужоу çине (Гуанси провинци) 50 бомба пăрахнă. Бомбăсем пăрахнине хулара нумай сийенсем пулнă.

Венгрире ĕвреймсене хирĕç кăларакан саккун пройенчĕ

ПРАГĂ, декабрĕн 28-мĕш. Вĕçĕм кун Венгри правительстви ĕвреймсене хирĕç кăлармалли саккун пройектне сӳтсе-явма парламента тăратнă. Саккун пройектне вуласа панă чухне хыттăн шавласа кайнă, докладчик—йустици министрĕ Таснад Наги калани те илтĕнмен. Социал демократла депутатсем хыттăн йăнăранă, «гитлерла саккунсем кирлĕ мар» тесе кăшкăрнă. Демократлăх пичет фашисла листовкăсемне, Имредин саккун пройекчĕсене пур майпа та ырлакан листовкăсемпе тавлашнă кĕрсе кайнă. Изгреймсене хирĕç кăлармалли саккун пройектне пичетлесе кăларнă май Будапештра тата ытти хулăсенче хăйсене хăйсем вĕлерекенсен хисепĕ йышлăланнă. Ĕнер Будапештри университети профессăр Либерман, куç кăрĕсем тĕлĕпне ĕçлекен палăл специалист, çавăн пекех тата палăл адвокатсипсатĕл—Верховнăй суд палатин членĕ доктăр Домбовары хăйсене хăйсем вĕлернĕ.

(ТАСС).

Танксемпе авиаци кучухнехи вăрçăра

(Йулашки)

ытларах—вĕсене 3—5 минутлăха та пудни перейми тăвасси пулать. Танксем орудисем патне пырса çитсе вĕсене пĕтерме çакăн чухлĕ вăхăт та çителĕкленĕ.

Тăшманăн вăтам тата пысăк калибĕрлă артиллерийĕ тăракан позицийсем çине атакă тăвасси те çак тĕллевпех пулать. Бомбардировочнăй авиаци групписем артиллерине нумай вăхăтлăха стробран кăларассĕ, çапла вара танксене пысăк дистанцисенчен пыма май парассĕ.

Тăшман хушшине кĕрсе кайса тăшман артиллерийĕне, ĕе унăн ĕеллерине çапăçма тытăнă танксене хирĕç тăшман хăй чухне тата хăйĕн танкĕсене те йама пултарать. Кунта авиаци ăдăчĕ вăл—тăшман танксене çĕмĕресси пулать.

Танксемшĕн авиаци тĕрĕм йăрса завеçă тума пултарни те пысăк пырăнта тăрать. Авиаци сахал самолетсемпех тăшманăн артиллерийĕ ĕе тапшĕсем çине тĕтĕм йăрса хупăрласа хума пултарать, çапла вара вĕсем пирĕн танксем сывхарса пынă вăхăтра неме пултараймаççĕ.

Опытран çакă курăнать: танксем кирек мĕнле тĕллев çине атăкă тăвас пулсан та, вĕсем атакă тăвас умĕн темиçе минут маларах авиаци атакă тусан ĕç ăнăçлăрах пулма пултарать. Йĕркеренех тухнă тăшман вара танксене хирĕç кирлĕ пек вăйăлă тăма пултарайăмасть. Çакăн çинчен Хасан кӳлли патĕнчи опыт лайăх кăтартса парать. Пирĕн авиаци Заозерайăк высота çине пăрахнă йăпанки бомбăсем çурăлса сирпĕнмĕ тĕлĕ, сăрт хĕррисене советсен атакăна тухакан хăруша танкĕсем курăнса та кайнă. Йапони захватчикĕсем хĕрлĕ авиацине танксем йепле пĕр-пĕрпине çурасуал пулса тăшмана хирĕç паттăрăн çапăçнине нумайччен астăвĕç.

Çакăн пек икĕ вăй пĕрле атакă тăвас тесен,—танксене авиаци вĕçĕсем пĕр майлă пулмала пекех, — вăхăтна анăçлă йенчен вĕсен вĕçĕсене питех те çирĕпленĕ пĕтĕçтерни кирлĕ. Ĵотчик таяк вĕçне, танкис хăйĕн авиацийĕн вĕçне пĕлмест пулсан, çакăн пек çурасуал ĕç пуҫма пултараймасть. Çар техникин тĕрлĕ хĕçпăвăлĕсене тытакан çынсем пĕр-пĕрне йăваралăхран хăтарас, тăшмана çĕнтерес нумай пухăнма хавалласа тăмасан, çакăн пек килĕшӳлĕ ĕç пуҫма пултараймасть.

Пирĕн çар вăйĕ совет халăхĕн никам çĕнтерейми пĕрлехĕ çине, пирĕн социалисăма тăван çĕршывăн хăваталăх мышлĕнпăçĕ çине, малта тăракан çар техники çине, çак техникăна пулас çапăçусенче усă курма пĕлни çине тайăнса тăрать. Пĕтĕм хĕçпăвал вăйăсем пĕр-пĕрине килĕшӳлĕн сыхăнса тăнипе—çĕнтерӳ пулассни кирлĕрен те кирлĕ фактăрĕ. Анчах та хĕçпăвалсен ĕçĕсем пĕрпĕрни сураçулă пулассни, çĕнтерӳ тăвассни никĕсĕ вăл, чи малтан, çынсем политикă тĕлĕнчен ăнланулă, тăшмана пĕтĕм чĕререн курăйман, паттăр, чăтăмлă, хăйсен техникине вĕренсе алла илнĕ, хăйсен вăйăн, хăйсен танкĕсене, хăйсен самолĕчĕсене шанса тăракан бойецсем.

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн паттăрĕсем—Ленин—Сталин партийĕне социализмăла тăван çĕршыв ĕçĕпех пĕтĕм чĕререн тăракан бойецĕсемпе командирĕсем—çакăн пек çынсем пуласçĕ те ĕнтĕ.

Полковник Ю. КОСТИН.

Канадăра фашиссене хирĕç бойкот тупи

Канадăра тухакан хăçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Канадăри пысăк хулăсенче—Монреальре тата Торонтора мирпие демократишен кĕрешекен Лига раштав праçникĕсем умĕн Йапонине Германи таварĕсене сутакан магазинсем умĕнче пикетсем организацилеме. Пикетра пулнисем «взрывçатсене вăмăне суту-илу тĕкĕнтумала мар», «хăвăр ачусем валăри Йапонире тунă выльăмали йапалапа» ярлăкăн листовкăсемпе тавлашнă кĕрсе кайнă. Изгреймсене хирĕç кăлармалли саккун пройектне пичетлесе кăларнă май Будапештра тата ытти хулăсенче хăйсене хăйсем вĕлерекенсен хисепĕ йышлăланнă. Ĕнер Будапештри университети профессăр Либерман, куç кăрĕсем тĕлĕпне ĕçлекен палăл специалист, çавăн пекех тата палăл адвокатсипсатĕл—Верховнăй суд палатин членĕ доктăр Домбовары хăйсене хăйсем вĕлернĕ.

(ТАСС).

Италин вăрçа хатĕрленме тăвакан ĕçĕсем

Франципе тухакан хăçатсем, Италин çине тăрсах Франципе хирĕç вăрçа тума хатĕрлени çинчен çырăççĕ. Франципе Италин чиккинче итальянецсем васкавлăн пит нумай укрепленисем тума тытăннă. Италири тĕрлĕ вырăнсенчен çарсене Франци чикки патне илсе пыраççĕ.

Италин флочĕ çитес вăхăтра Тиррен тинĕсĕнче пуçтарăнса тăмала.

(ТАСС).

Италин Хĕвелтухăç Африкăри çарĕсем

ПАРИЖ, декабрĕн 28-мĕш. Италин Джибутине тата Франци Сомалине туртса илес хăрушлăх тухса тăнă май, Табуи „Эвр" хăçатра çапла палăртат: йулашки сведенисем тăрăх, Хĕвелтухăç Африкăра Италин итальянецсен чĕçĕсене 91 пин çын, Италири «рабочи салтаксем» 130 пин çын тата вырăнти халăхран тухнă çарсем 150 пин çын тытса тăраттăр.

(ТАСС).

Вуникĕ мĕлйард тенкĕлĕх тавар туса кăларнă

МУСКАВ, декабрĕн 29-мĕш. Малтанлăха шутланă тăрăх, Сойузри промысла кооперацин çак çулта 12 мĕлйард тенкĕлĕх—иртнĕ çултинчен 13 процент ытла продукци туса кăларнă.

Çулталăк хушшинче 2,5 мĕлйун кроват, 3,5 мĕлйун мăшăр çăматă, 13 пин радиоприйомник ламписем, 585 репродуктăр, шчипкăвăл музыкă инструменчĕсем 600 пин штук, 185 пин патефон, 700 пин примус, ачасене выльăмали йапаласем 200 мĕлйун тенкĕлĕх, 130 мĕлйун тенкĕлĕх çĕвĕ çĕлемели йапаласем туса кăларнă.

1938 çулта промкооперацин картонсем тăвакан чылай хăйăрккем експлоатăпине йăвăç, вĕсем çулталăкра 5.5 пин тонăвина йăхăн картон туса кăларассĕ. Ленинграда радиоприйомниксем ламписем тата тĕрлĕрен радиоизделисем тăвакан пысăк хăйăрăк туса пĕтерĕ. Москавра çĕвĕ çĕлекен галантерейă хăпăркине çĕнетсе вслăлатнă. Вăл çулталăкра 21 мĕлйун тенкĕлĕх продукци туса кăларать. Кирăра гармоньсем тăвакан çĕнĕ хăпăрка тунă. Вăл çулталăкра 16 пин гармоньне туса кăлармала.

Çак çулта Сойуз тăрăх пинлĕрпе промысла-кооперативлă ертелĕсем çĕнĕрен организацилеме. Атă-пушмаксем йуслс тĕлĕпне ĕçлекен мăстерскойсем 4 пине йăхăн, уйăрăмларăн тумтирсем çĕлес тата йусас тĕлĕпне ĕçлекен мăстерскойсем 15 пин, кăлте тытăкалакан йапаласене йусакан мăстерскойсем çĕнĕрен 700 ытла уçнă.

(ТАСС).

И. Т. Спирина профессăр званине панă

Декабрĕн 29-мĕшĕнче нăçхине ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи асла шкул ĕçĕсен Пĕтĕм Сойузри комитечĕн Высши аттестацин комиссийĕн ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларура Жуковский ăйăпĕне тăракан Ленин орденлĕ Сывлăш-Çар Академийĕн Совечĕ Совет Сойузĕн Геройне комбриг И.Т. Спирина профессăр званине панă.

Тупăшсене валеçме хатĕр

ЙĔТĔРНЕ. Кĕçĕн Шемертенти „Çĕнĕ звено" колхоз членĕсем 1938 çула чапăлан вĕçлерĕç. Кăçал, çанталăк уйăр тăчĕ пулин те, пирĕн колхозниксем начар мар тырпул пуçтарса кĕчĕç.

Государствăна умĕнчи обязательствăсене тултарни хыççăнах çитес çуркунне валăйă вăрăх, страховой фончĕсене тата выльăх-чĕрлĕхсем валăйă кирлĕ тараннах тĕштырăсем уйăрса хутăмăр.

Халĕ колхозра тупăшсене ĕçкуçĕсем тăрăх колхозниксене валеçсе пама хатĕрленсе çитнĕ. Кашни ĕçкуçĕ пуçне 2 килограм тĕштыра тата 50 пус укçан валеçĕнет. Колхозра тăрăшса ĕçленĕ çемйесем çĕршер пăт тырă, темиçе çĕршер тенкĕ укçан илеççĕ. Акă, Орешин Йегор çемйи 100 пăт тĕштыра, 400 тенкĕ укçа илет.

„Çĕнĕ звено" колхоз çитес болăшевикла çуракине те тăрăшса хатĕрленсе пырать.

Н. Тимофейĕн.

Украйнă шăпчăкĕ

Н. И. ШЕЛЕПИН

Чечелăй Украйнă шăпчăкĕ,
Асăлă сăвăçă Шевченко!—
Асăнап йубилей ячĕпе,
Ордĕнлă Чăваш чĕлхине

Есӳ хисеплĕ, пăтӳ чапăç,
Пурӳсем-хитре, хаваслă,
Ватти-пĕттине хĕпĕртетнĕр
Санăн сăвӳсемпе епĕр.

Тĕрме те сана хăратаймăн-
Семьăка та сырма чарайман.
Пуплă пусмăра çĕмĕрсенĕн
Есĕ хĕрӳлĕн кĕрешнĕ.

Санăппа сана сума-суса
Пĕтĕм Çĕршывĕнех чыслатпăр,
Сан ĕçӳсене пахаласа
Чаплă йубилей тăваттăр.

Есе ĕмĕр чĕрĕ, асăлă çын,
Сан тăшманусем путрĕçĕ,—
Санăн йушша ĕçпе сĕлĕхсем
Йуп лачакипех пулчĕçĕ.

Хĕрлĕ йалавпа ĕççынписем
Пусмăр сăнчăрне çĕмĕрчĕç,
Ес ĕмĕтленнĕ пĕрĕлĕхсем,
Чи сутă кунçулсем çитрĕç.

Асăлă Октябрĕр тивлечĕне,
Пирĕн халăх каçарланчĕ,
Асăлă Сталин йĕртсе пынине
Телейлĕ кунçул туйанчĕ.

Вилемсĕр сăвăçă Шевченко—
Савнă Украйнă шăпчăкĕ!
Сана халăх чунтан йуратать
Чаплă чулпалăксем лартать.

Революци йӳррин шăпчăкĕ,
Украйнăн асăлă сăмахĕ,
Паттăр Тарас, сывă пулччĕр сан
Кăвардăк йӳрру-сăввусем!

ИККĔН

Сывхарнă каç. Силсем уланă,
Сив çăмăр çунă пĕлĕтрен.
Çак каç вĕсем тухса уттарнă
Хăйсем çуралнă йалĕнчен.

Киле пĕччен çеç йулнă амăш,
Каланă вăл:—«Çĕнтерчĕвех,
Тăван çĕршыв Испани—пулмĕ
Фашиссене, вăл—пирĕнпех!»

Сывхарнă май вăйланнă çăмăр—
Вăл «çăмăр» пулнă тăхлантан.
Мала утмашкăн питĕ йăвăр—
Ухлатнă тупă сывăхран.

Вĕсем часах фронта ак çитнĕ,
Анчах йăваншăн питĕ йăвăр—
Аш йун фонтан пек пĕрĕхтернĕ,
Тапма пăрахнă ун чĕри...

Сывăппа та çав каç васкавлăн
Тухса ун утнă ачисем,
Тытса кашни пĕрер пăшал,
Сывхарнă фронт патне вĕсем.

Йĕрсе тăман ун савнă пиччĕш
Вăл хыттăн чупнă малала.
Çав тĕттĕм каç вĕсем отрăячĕ
Кайала илнĕ ик йала.

Ник. Александрăв.

ÇӲРЕН УТСЕМ

Çӳрен утсем йӳртăпала иртеççĕ,
Пысĕсене пурте пĕр пек ухса.
Унччи кĕрсем пăхса йулаççĕ
Ишĕчĕсем çине йăл-йăл кулса.

Чипер кĕрсем вăл-вĕл вĕлкĕштереççĕ
Хисеп туса шап-шурă тутăрсем.
Çӳрен утсем йĕркипеле иртеççĕ,
Йăлтăртатаççĕ сутă тăкансем.

Кунсеренех йĕр-каçăн вĕренеççĕ,
Вăрçă ĕçне колхоз хĕр-мăлăйсем.
Сулсеренех вĕсем ситĕнтереççĕ
Çăмарта пек чăмăр çӳрен утсем.

Тĕрлĕ-тĕрлĕ çуртсем, пахча, сат çумăн
Йӳртăпала иртрĕç йулануртсем.
Ишĕчĕсем пурте йĕм-йешĕл тумлă,
Татма тăнă улма пек пичĕсем.

Пр. Сатур.

Çĕнĕ ертел

Кушар йалсоветĕнче (Трак р.) çĕнĕ алăсталăх ертелĕ организацинленĕ. Ертелĕн çаматă йăвалакаç, тир тăвакан, атă-пушмак çĕлекен мăстерскойсем пулаççĕ. И. Хăт.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНАВ.

ÇĔНĔ КĔНЕКЕСЕМ

Сывăх кунсенчех

„МОСКВА РЕКОНСТРУИРУЕТСЯ"

йăтлă пысăк

ХУДОЖЕСТВАЛЛĂ АЛЬБОМ

пичетрен тухăт

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б)Н Тĕнкомĕ „Москава генерацийлĕ реконструкци тăвасси çинчен"

вышăннă историлĕ постановлени альбома диаграммăсемпе, схемăсемпе тата фото-ӳкерчĕксемпе кăтартса панă.

АЛЬБОМ кивĕ Москавпа, пĕлăвни Москавпа тата пулас Москавпа пал; паштарать.

АЛЬБОМРА купеçсен, фабрикантсемпе чиновниксен ĕлĕхси хулине—Москава гигантла уйăхтарса çĕнтенине, тĕнчере чи лайăх, чи культурăлă, чи благоустроенăлăй, пăсмăк хулăна—асла хулăна, социализмăлă государствăн стодицине кăтартса панă.

Альбом хакĕ 150 тенкĕ

АЛЬБОМА кӳгизăн пур магазинсенче те малтанах çырăнса илме пулать.

ЧĂВАШ АССР 12 СУЛ ТУЛТАРНĂ ЙĂТПА ТĂРАКАН

КАНМАЛИ СУРТĂН

(Атăл леш енче, „Кузнавкă") государствăлă тата кооперативлă учрежденисене сутмалли

пуҫовăçсен хисепĕ вĕçлĕ çеç,

çавăнпа та мĕн чухлĕ пуҫовăç кирлине пирĕн вăйăвăçсене вăхăтра тăратасси тата догăвăрсем тăвасси çинчен асăрхаттарать.

Догăвăрсене пачварăн 5, 10, 15, 20 тата 25-мĕшĕсенче Чăваштромкассă суртĕнче ирăнне 9 сехетрен пуласа кăнăрда 4 сехетчен тăвассĕ.

Адрес: г. Чебоксары, ул. Калинина, 49.

Чăваштромкассă.

ХИСЕПЛĔ ГРАЖДĂНСЕМ!

Есĕр тутлă та тутă апат хатĕрлĕç тетĕр пулсан апата тутлантарма

„СОЯ—КАБУЛ"

Е

„СОЯ—ВОСТОК"

çимĕççемпе УСĂ КУРĂР.

Çавсене Сойузпродмагăн „Бакалея" магазинĕсенче Шупашкарта, Канаш, ВРЗ-ра йăлăнах тупса илме пултаратăр.

Сӳтертри вăрман санăчĕ

УЧРЕЖДЕНИСЕМПЕ ОРГАНИЗАЦИСЕНЧЕН

тата

УЙРĂМ СЫНСЕНЧЕН

ЙĂВĂÇ СУРМА

кирек мĕн чухлĕ те йышăнăç

Правлени.

Чăвашполиграфиздатăлăхĕ № 595

Гор. Чебоксары типография № 1 Мостпрома ЧАССР. заказ № 881 ф. Б. 5ăХ84 в. 81